*...Çав пĕртен-пĕр пахча,*
*унта тĕнчери чи лайăх*
*карта.*
**А. АХМАТОВА.**

# «Эпĕ чăваш йăхĕнчен...»

Ленинградра пĕтĕм тĕнчипе чапа тухнă Çуллахи сад карти Дворец урамне илем кӳрсе тăрать. Ăна часчасах «тĕнчери тĕлĕнтермĕшсенчен пĕри», теççĕ, унăн илемĕ çинчен сăвăсем çыраççĕ, ун çинчен тĕлĕнмелле япаласем каласа параççĕ.

...Иртнĕ ĕмĕр варринче Петербурга пĕр путиш акăлчан килнĕ. Ватлăхра «тĕнчере мĕн илемлине пĕтĕмпех курма» шутласа, вăл Нева хĕррине пырса тухнă, кунта Çуллахи сад картине курасшăн пулнă.

Акăлчан карта илемĕпе тĕлĕнсе ăнтан кайнă, тӳсеймен вăл, çакăн çинчен пĕр иртен-çӳрене каласа панă. Çав иртен-çӳрен И. А. Гончаров пулнă-мĕн, тĕлпулу çинчен вăл тусĕсене хавасланса каласа кăтартнă...

Акă тата тепĕр истори. Граждан вăрçи чăрăннă хыççăн часах пирĕн çĕршыва американец миллионер килнĕ. Кун умĕн вăл Европăра пулнă, унта хайне мĕн килĕшнине ним чăрмавсăрах туянма пултарнă. Петроградри паллă вырăнсене курса çӳренĕ хыççăн çак «илеме юратаканскер» Совет правительствине ĕçлĕ сĕнӳ панă: пĕр Çуллахи сад картишĕн «кăна»... çĕр паровоз пама хатĕр!

Ун чухнехи йывăр çулсенче — хуçалăх юхăннă, выçлăх алхаснă вăхăтра — çак сĕнӳ самаях илĕртӳллĕ пулнă. Анчах Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çутĕç халăх комиссарĕ А. В. Луначарский хирĕçленипе килĕшнĕ, хастар коллекционерпа калаçăва хутшăнман.

Çуллахи сад картине XVIII ĕмĕр вĕçĕнче туса лартнă, çав вăхăтри çынсене вăл илемĕпе тĕлĕнтернĕ. XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче К. Н. Батюшков поэт çапла çырнă: «Çуллахи сад решетки çине пăхăр-ха, вăл çакасен, хурамасен, юмансен ешĕлĕ çинче çиçсе тăрать! Мĕн тери çамăллăх, мĕн тери ĕлккенлĕх унăн чĕнтĕрĕнче! Эпĕ Тюильри замокĕн чаплă решеткине курнă, вăл — йывăр, ăна акăш-макăш эрешсем — сăнăсем, каскăсем, трофейсем пусса тăраççĕ. Кунпа танлаштарсан, вăл — сăнсăр». Акă тата И. Э. Грабарь çапла калать: «Тĕлĕнмелле ансат пулин те асăмăрта савăнăçлă та чаплă йĕр хăваракан çакăн пек решеткене эпир Европăра курман».

Нумай вăхăт хушши çуллахи сад картин авторĕ Юрий Фельтен пулĕ тесе шутланă. Анчах карта хăйĕн илемлĕх паллисемпе çав архитекторăн ытти произведенийĕсенчен пачах урăхла. Çавна май пĕрисем — В. Баженова, теприсем — Ж. Деламота е А. Ринальдие карта авторĕ тесе калани те пулнă. Нумай пулмасть Р. Люлина искусствовед архивсенче çĕнĕ документсем нумай тупнă, вĕсене тĕпчесе тухса, вăл çакăн пек вывод тунă: карта авторĕ Петр Егоров архитектор пулнă.

Петр Егоров ячĕ (1731—1789) 100 çул хушши ытла манăçа тухнă ят пулнă. Анчах хăй вăхăтĕнче вăл питĕ паллă çын пулнă. Унăн биографийĕ ахальскер мар. Документсенчен пĕринче вăл хăй çинчен çапла çырать: «Эпĕ чăваш, мана ача чухнех артиллери генерал-майорĕ Дадиани князь Российăна илсе килнĕ...»

Егор Леонтьевич Дадиани (1683—1765) хăй вăхăтĕнчи нумай вĕреннĕ, ырă кăмăллă çынсенчен пĕри пулнă.

Чăваш ачи Дадиани çемйине мĕнле пырса лекни халлĕхе паллă мар-ха. Кирек мĕнле пулсан та, князь килĕнче ачана «православи тĕнне кĕртнĕ», ăна Петр Егорович Егоров тесе ят хунă (апшĕ ячĕпе хушаматне князь ятĕнчен илнĕ). Кунтах ăна, хăй çырнă тăрăх, «хута вĕрентнĕ: вулама, çырма, арифметикăна, геометрие, алăпа ӳкерчĕксем ӳкерме, çуллă сăрпа çырма вĕрентнĕ».

1755 çулта Петр Егоров Дадианин рекомендацийĕпе çырăвĕпе Санкт-Петербурга пырса çитет, хăйĕн челобитнăйĕнче (ыйтăвĕнче) вăл «императорăн Çурт-йĕр канцелярийĕ* çумĕнче архитектурăна вĕренме пикенсех кăмăл туни» çинчен çырать.

Канцелярин аслă архитекторĕ В. В. Растрелли пулнă. Вĕреннĕ чухнехи çулсенчен пуçласах Петр Егоров унăн мĕнпур планĕсене пурнăçа кĕртме хутшăннă.

1763 çулта Петр Егорова Пярну хулинчи (Эстони) Успени чиркĕвĕн** проектне хăй тĕллĕн тума шанса панă.

1768 çулта чаплă Мрамор дворецне тума пуçланă (проектне А. Ринальди хатĕрленĕ), ку вăл Ленинградри чи илемлĕ те оригиналлă çуртсенчен пĕри (халĕ кунта В. И. Ленинăн Тĕп музейĕн филиалĕ). Двореца çиелтен гранитпа тата мраморпа илемлетнĕ (çавăнпа ăна Мрамор дворецĕ, тенĕ).

Двореца 18 çула яхăн тунă, строительство ĕçĕсене пĕтĕмпех Петр Егоров ертсе пынă. Кунсăр пуçне, нумай пулмасть тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, унăн проекчĕ тăрăх Мрамор дворецĕн служба корпусне туса лартнă (XIX ĕмĕр варринче ăна А. Брюллов çĕнĕрен урăхлатса тунă). Хăйĕн 1794 çулта тухнă кĕнекинче И. Георги, Петербургри паллă вырăнсем çинчен каласа панă май, служба корпусĕ çинчен çапла çырнă: «Кунти пек кăмăла каякан çуртсем питĕ сайра тĕл пулаççĕ».

1770 çулта Нева çыранĕсене гранитпа хытарса тухма тытăнсан, Çуллахи сад картине тума пуçланă, çак ĕçе те Петр Егоров ертсе пынă. Столицăри строительствăн тĕп ведомствинче Петр Егоров 34 çул ĕçленĕ, 1766 çултан пуçласа мĕн виличчене вăл унта архитектура шкулне ертсе пынă.

Петр Егоров чаплă архитектор пулни çинчен Фельтен çеç мар, ун хыççăн Кантурăн аслă архитекторĕ пулнă И. Старов та мухтаса çырать.

Çуллахи сад картин чертежĕсемсĕр пуçне Егоровăн ытти чертежĕсем те сыхланса юлнă: Пярнури чиркӳри турăшăн фасачĕпе планĕ, Раштав чиркĕвĕнчи турăшăн икĕ чертежĕ, Иоранин икĕ чертежĕ. Вĕсем архитектура историйĕнче паллă вырăн йышăнаççĕ, илемлĕхĕ енчен те паха.

Петр Егоровăн проект чертежĕсем вăл хăйне евĕрлĕ, талантлă архитектор пулни çинчен калаççĕ. Вĕсем уçăмлăхĕпе, илемĕпе, поэзийĕпе палăрса тăраççĕ.

**Э. КУЗНЕЦОВА.**
**«Дружба народов» журнал, № 1, 1972 ç.**

---

* Çурт-йĕр канцелярийĕ (каярахпа — Кантур) строительствăн тĕп ведомстви шутланнă, XVIII ĕмĕрĕн пĕрремĕш çуррине вăл тăван çĕршыва архитекторсем вĕрентсе хатĕрлекен пĕртен-пĕр вĕренӳ заведенийĕ пулнă (Художество академине каярахпа уçнă).

** Ку чиркӳ пирĕн вăхăтченех сыхланса юлнă, халĕ ăна час-часах Екатерина чиркĕвĕ теççĕ, мĕншĕн тесен II Екатерина ăна хулара пурăнакансене парнеленĕ.